15-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942 АВГУСТ 12 ЮНКУН 187 (6122) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Орденлă республикăн чысне çӳлте тытар

Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсем паян пĕр çулăмлă ĕмĕтпе, пĕр тĕллевпе турăнаççĕ: тăван çĕршывăн чыслăхĕпе ирĕклĕхне тискер тăшманран хӳтĕлесе хăвармалла, çĕршывăн пурнăç центрĕсем патнелле талпăнса кĕрекен гитлеровецсен çаратуçă-çарне чарса лартмалла, ăна вĕлермеллех пырса çапса каялла сирсе ывăтмалла.

Пирĕн кунçул ыйтăвĕ пулса тăракан çак тĕллеве пурнăçа кĕртнĕ çĕрте чăваш халăхĕ, çĕршыври ытти мĕнпур халăхсемпе алла-аллăн тăрса, паттăррăн кĕрешет. Чăваш халăхĕн ывăлĕсем отечественнăй аслă вăрçăн фрончĕсенче тăшмана кирĕç хăюлăхпа геройлăх кăтартса çапăçаççĕ. Вĕсем аслă Совет Союзĕн чаплă ячĕпе пĕрлех, хăйсен тăван республикин — Ленин орденлĕ республикăн ятне те çӳлте тытаççĕ. Çавăн пекех республикăри предприятисемпе колхозсем те, рабочисемпе колхозниксем те фронт мĕн ыйтнине ăнăлтах туса парассишĕн хăйсен вăйĕсене хĕрхенмесĕр ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен тылри ĕçĕпе фронтри боецсене тивĕçлĕ пулма тăрăшаççĕ.

Пирĕн республикăра ялхуçалăхĕ, пуринчен ытла тырпул акса тăвас ĕç, тĕп вырăн йышăнса тăрать. Пирĕн тăван çĕршывпа фронт валли ытларах тырпул, апи-какай, сĕт-çу, пахча-çимĕç, промышленность валли ытларах чĕртахăр туса парассишĕн кĕрешмелле. Тăван çĕршывшăн хаяр та йывăр кунсем килнĕ вăхăтра пирĕн татах та хĕрӳллĕрех ĕçлемелле. Орденлă республикăн ятне кашни колхозăн, кашни бригадăн, кашни колхозникăн, колхозницăн çӳлте тытмалла.

Халĕ тырпула пухса кĕртес тĕлĕшпе хĕрӳ ĕç пырать. Республикăри çĕршер колхозсем, пиншер колхозниксемпе колхозницăсем вăйлă тырпула ăнăçлăн пухса кĕртессишĕн, выльăх-чĕрлĕхсен йышĕпе продуктивноçне ӳстерессишĕн пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç. Умра тăракан пысăк та ответлă задачăсене ăнланса, пирĕн республика ялхуçалăхĕнче татах та пысăкрах çитĕнӳсем тăвассишĕн кĕрешет. Пирĕн колхозсем кăçалхи çуракине ăнăçлăн туса ирттерчĕç. Çурхи тырăсене планран ирттерсе 17.466 гектара ытлан акса хăварчĕç, çĕршыв оборонин фондне хывма тата нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозниксене тăванла пулăшу пама планран ирттерсе 4 пин гектар ытла тырă акса ӳстерчĕç.

Уборкăн малтанхи кунĕсенчех нумай колхозсем ĕçе пысăк çĕкленӳпе анлăн тума пуçăнчĕç. Тырăсене вырса пухас ĕçе республика кăçал нумай хут лайăхрах, организованнăрах туса пырать. Ĕçре социализмлă ăмăртăвăн вăйĕпе усă курса, уйхирсенчи ĕçсене большевикла йĕркелĕхпе туса, малта пыракан çĕршер колхозсем кĕрхи тырăсене 4—5 кун хушшинче вырса илчĕç.

Колхозниксемпе колхозницăсен ĕçлес хастарлăхĕ кунран-кун çĕкленсе пырать. Вĕсем уборкăра фронтри пек хастарлăн ĕçлеççĕ. Елчĕк районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз 660 гектар çинчи кĕрхи тырăсене 7 ĕç кунĕнче вырса пĕтерчĕ. Колхозăн машиновечĕ Афанасьев юлташ кашни кунах жнейкăпа 11-шер гектар вырса пынă. Çĕмĕрле районĕнчи «Красноармеец» колхоз членĕ Халманов юлташ кĕреплеллĕ çавапа кулленех пĕрер гектар тырă вырса пынă. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Волна» колхозра тырă вырнă çĕрте кулленех 184 колхозник тимлĕн ĕçлет. Вĕсем ĕçе ирхине 6 сехетре тухаççĕ те каçхине сĕм тĕттĕм пуличченех ĕçлеççĕ.

Кĕрхи тырăсене вырса пухас ĕçсем уйрăмах Вăрмар, Елчĕк, Чкаловски районсенче пысăк çĕкленӳпе пулса пыраççĕ. Елчĕк, Вăрмар районĕсенчи нумай колхозсем ыраш вырса пĕтернĕ, кĕлтесене çийĕнчех итемсем çине турттарса капана хываççĕ, авăн çапаççĕ, государствăна тырă параççĕ.

Государствăна тырă тăратас обязательствăна срокчен пурнăçласси—пирĕн колхозсен чыслă тивĕçĕ. Тырăсене пухса кĕртес ĕçе кунран-кун вăйлатса пынипе пĕрлех, колхозсен тырăсене çийĕнчех çапма тытăнмалла, государствăна тырă срокчен тата пĕтĕмĕшпех парса татма тăрăшмалла. Нумай колхозсем уборка пуçлансан 4—5-мĕш кунĕнче авăн çапса государствăна чи малтанхи паха тырра пама пуçларĕç. Куславкка районĕнчи колхозсем августăн 10-мĕш тĕлне государствăна обязательство шучĕпе 55 тонна çĕнĕ тырă панă. «Ленинский призыв» колхоз 3—4 кун хушшинче государство умĕнчи тырă обязательствине 30 процент пурнăçларĕ. Августăн 1-мĕш тĕлне пирĕн республика государствăна 1942 çулти обязательство шучĕпе 3,5 процент чухлĕ çĕнĕ тырă панă. Анчах çакă вăл çителĕксĕр-ха.

Республикăн хăшпĕр районĕсенчи колхозсенче тырăсене вырса пухас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Ишлей, Сĕнтĕр, Красноармейски районĕсенче тырă вырас ĕç кирлĕ çĕкленӳпе пулса пымасть.

Советски тата ытти хăшпĕр районсенчи уйрăм руководительсем тата колхозсен председателĕсем халĕ те машинăсене хирĕçле шухăш-кăмăлтан уйăрăлман. Йĕпреç районĕнче, тĕслĕхрен, 25 колхозра ыраш вырас ĕçре машинăсемпе пачах усă курмаççĕ. Районра 700 кĕреплеллĕ çава туса хатĕрленĕ пулсан, ыраш вырнă çĕрте 60 çавапа çеç усă кураççĕ.

Машинно-тракторнăй станцисем те паянхи куна комбайнсене пĕтĕм вăйĕпе ĕçлеттерме тытăнман-ха.

Уйрăм комбайнерсем паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ пулсан та, республикăри чылай районсенче комбайнсемпе туллин усă курни çук, МТС директорĕсемпе политотдел начальникĕсен тырăсене вырса пухас ĕçре комбайнсен ĕçне тивĕçлипе организацилесе пыма тăрăшмалла.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура нумай колхозсем паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ, ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем туса пыраççĕ. Кашни колхозрах социализмлă ăмăртăва вăйлатса пырса ĕçĕн тухăçлăхне ӳстермелле. Ĕç результачĕсене çийĕнчех тата тĕрĕс шута илсе, малта пыракан колхозниксемпе колхозницăсен, стахановла ĕçлекен звеносен ĕç опытне анлăн сарса, пĕтĕмĕшлĕ ӳсĕмсем туса ĕçлемелле. Колхозницăсене уборкăра куллен пĕр чăрмавсăр ĕçлеме лайăх условисем туса памалла. Республикăри чылай колхозсенче ача яслисемпе площадкисене организациленĕ. Анчах та хăшпĕр колхозсенче çак ĕç çине çиелтен пăхнине халĕ те пĕтермен-ха. Тăвай районĕнчи «Комсомолец» колхозра ясли уçман пиркиех хĕрарăмсем уйра тивĕçлипе ĕçлеймеççĕ.

Çĕршыв тăшмана хирĕç йывăр çапăçусем туса пынă вăхăтра кашни колхозникăн колхозницăн, МТС работникĕсен тата ытти çĕрĕç работникĕсен хăйсен пĕтĕм вăйне тырпула пухса кĕртес ĕçе хумалла. Кашни килограмм тырра типтерлĕн пухса кĕртмелле. Уборкăри ĕçсене пысăк пахалăхпа туса ирттерни—çĕнтерӳ никĕсне хуни пулать. Уборкăра çĕнĕ çĕнтерӳсем тунипе хамăрăн орденлă республикăн чысне çӳле çĕклер, тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çара ытлăн-çитлĕн тырпул хатĕрлесе парар!

Колхозник юлташсем! Хамăрăн тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе чыслăхне сыхласа хăварар! Тырпулсене пухса кĕртнĕ çĕрте вăя шеллемесĕр ĕçлесе, нимĕçсен фашистла мерзавецĕсене çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшар!

Тырă вырас ĕç юлса пырать, çапах та машинăсем ĕçлемеççĕ

ЙĔПРЕÇ, августăн 11-мĕш. (Телефонпа). Район паянхи куна кĕрхи тырăсене пурĕ 3175 гектар вырса ĕç планне 48 процент тултарчĕ. 8 колхоз ыраш вырса пĕтернĕ. «Комбайн», «Костер», «МОПР», «Чувашия» колхозсем ырашa паян вырса пĕтереççĕ.

Колхозниксен анлă масси тырпулсене пухса кĕртес ĕçре кăçал фронтри хастарлăхпа ĕçлет. Халĕ, хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче, вĕсем пĕтĕм вăя колхозăн уйхирĕсенчи тырпула хăвăрт та тăккаламасăр пухса кĕртесси çине хураççĕ.

«Коммунар» колхозри ĕçлеме пултаракан 60 колхозник уборкăна тухнăранпа уйри ĕçрен пĕр сехет те юлман. М. Семенова, П. Сергеева колхозницăсем алăпа кулленех 0,18-шер гектар ыраш выраççĕ. Татьяна Яковлова, Е. Елизарова, А. Ефимова, М. Агеева колхозницăсем кĕреплеллĕ çавасемпе кулленех 0,45—0,50-шер гектар выраççĕ. «Костер» колхозра М. Степанова, К. Ярцева, Е. Крылова колхозниксем тырă вырнă çĕрте кулленех икшер норма тултарса ĕçлеççĕ. Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз членĕсем ĕçе кулленех 4 сехетре тухса каçхине тĕттĕм пуличченех тимлĕн ĕçлеççĕ. К. Фомкина, У. Мамонтова колхозницăсем кунсерен 0,23-шер гектар вырса пыраççĕ.

Халĕ, çĕршыв хаяр кунсене пурăнса ирттернĕ вăхăтра, кашни колхозникпа колхозница колхоз хирĕнче куние-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлеме тивĕçлĕ, кашни ĕçлеме пултаракан çыннăн стахановецсен ретне тăмалла. К. Маркс ячĕпе тăракан колхозра çавăн пек тăваççĕ те. Кунта куçса килнĕ çынсем те ĕçе активлăн туса пыраççĕ. Полякова юлташ хăйĕн çамрăк ачипе пĕрле талăкра 0,28 гектар таран ыраш вырать.

Анчах та хăшпĕр колхозсенче тырпула вырса пухас ĕç тӳсме çук вăрăма юлса пыни сисĕнет. Уйрăмах Туçа, Çĕнĕ Чураш, Йĕпреç, Кировски тата Савка ялсовечĕсенчи колхозсем юлса пыраççĕ. «Социализм» колхоз ыраш вырас плана пурĕ те 19 процент ытларах çеç, «Красный металлист», «Красный фронтовик» колхозсем 25—28 процент çеç пурнăçланă. Ĕç сӳрĕккĕн пынин сăлтавĕ — ку колхозсенче ĕç дисциплинине тивĕçлĕ вырăна лартманнинче.

Уборка вăхăтĕнче пĕр кун сухатни кĕркуннехи вунă кунпа танлашать. Тырăсене халĕ хăвăрт вырса пухманни пĕтĕм ĕçе вăраха хăварать.

Августăн 7-мĕшĕнче «10 лет Октября» колхозра ĕçе 7 колхозник, «Победа» колхозра 13 колхозник, «Путиловка» колхозра 7 çын, пурĕ çак кун 9 колхозра 43 çын ĕçе тухман. Çакăн пек ĕçе тухмасăр тăни—çĕршыв умĕнче преступлени туни пулать.

Районри колхозсенче машинăсене хирĕçле шухăш-кăмăла халĕ те пĕтермен-ха. Паян куна 25 колхозра машинăсемпе пачах усă курмаççĕ. Районĕпе пурĕ 700 кĕреплеллĕ çава туса хатĕрленĕ пулсан, 60 çавапа çеç усă кураççĕ.

Д. МИХАЙЛОВ.

МТС политотделĕсем тата тырпулсене пухса кĕртес ĕç

Хальхи хăрушă кунсенче колхозниксен тата МТС работникĕсен чи хисеплĕ тивĕçĕ — пĕтĕм вăя хурса фронта пулăшса тăрасси пулать. Социализмлă ялхуçалăхĕнчи работниксен, пуринчен малтан, тырпулсене вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртес задачăна ăнăçлăн татса парас пулать.

Колхозниксемпе МТС работникĕсен патриотизмлă çĕкленĕвĕ, пысăк тухăçлă тырпулшăн социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса кайни, партипе совет организацийĕсем тата МТС политотделĕсем оперативно ертсе пыни çуракине ăнăçлăн ирттерме май пачĕç. Машинно-тракторнăй станцисен ĕçĕ енĕпе çураки ĕçĕсене пăхса тухнă чухне пирĕн республикăна Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме кандидата кĕртнĕ.

Ялхуçалăхĕнче чи ответлă тапхăр килсе çитрĕ. Колхозсен уйхирĕсенче тырпулсене пухас ĕç массăллăн сарăлса кайрĕ. Уборка ĕçĕсене пирĕн çуракинчен те ăнăçлăрах ирттермелле. Кашни гектар çинчи тырпула пĕр тăккаламасăр, правительство кăтартса панă сроксенче пухса кĕртмелле.

Тырпулсене пухса кĕртес тĕлĕшре МТС политотделĕсен хăйсен ĕçне СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1942 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление тĕпе хурса туса пымалла. Ялти пĕтĕм партиллĕ-политикăллă ĕç, МТС политотделĕсен пĕтĕм ĕçĕ çак постановление пурнăçа кĕртес енĕпе пулса пымалла.

Политотделсем çураки вăхăтĕнче политикăллă ĕçĕн опытне туянчĕç. Хăйсем тавра беспартийнăйсен активне явăçтарма пултарнă, коммунистсемпе комсомолецсене чи кирлĕ участоксене вырнаçтарса тухнă, хирте тата колхозсемпе тракторнăй бригадăсенче чăнчăн большевикла ĕçе туса пынă, социализмлă ăмăртăва пуçарса оперативно ертсе пынă политотделсем ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунă. Вĕсем хуçалăхра большевикла йĕрелĕх, сирĕп дисциплина туса хурассишĕн кĕрешнĕ, çĕнĕ кадрсене тăрăшса ӳстерсе пынă. Çак опыта çирĕплетсе, йышлатса пымалла.

Тырпулсене пухса кĕртес ĕç кăçал организованнăрах пуçланчĕ. Уборка ĕçĕсем уйрăмăнах Вăрмар, Куважкино, Пăрачкав, Чкаловски, Комсомольски, Калинински районсенче ăнăçлăн пулса пыраççĕ. Тӳрех калас пулать, уборка ĕçне пур районсем те вăхăтра тытăннă пулсан, малтахни кунсенчен пуçласах колхозсемпе МТС-сен машинисемпе туллин усă курнă пулсан, тырă вырас ĕçре кĕреплеллĕ çавасемпе анлăн усă курнă пулсан, апир халĕ вырнинчен икĕ хут нумайрах вырнă пулăттămăр. Чылай районсем тырă вырма питех те кая юлса тухрĕç. Сĕмахран, Сĕнтĕр районĕ тырă вырма августăн 1-мĕшĕнче тухас вырăнне, августăн 3-мĕшĕнче те, тырă вырма тухма май пуррипе çуккине пĕлес тесе, хирсене тĕрĕслесе çеç çӳренĕ. Тырă вырма тухас ĕçре çавăн пекех Элĕк, Ишлей тата Красноармейски районсем те кая юлчĕç. Вырма пуçласан та ку районсенче машинăсемпе тата çавасемпе усă курман, çавăнпа та уборка ĕçĕсем хуллен пулса пычĕç. Красноармейски районра кашни кунах 1.000—1.200 гектар вырма май пур пулин те, 300—400 гектар çеç выраççĕ. МТС политотделĕсем çак çитменлĕхсене кураççĕ, анчах вĕсене пĕтерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Уборка ĕçне хăвăртлатас тĕлĕшпе колхозсемпе МТС-сенче тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ.

Халĕ ĕнтĕ комбайнсен пĕтĕм вăйпа ĕçлемелле. Чылай комбайнерсем малтанхи кунран пуçласах ĕçре начар мар результатсем кăтартаççĕ. Елчĕк МТС-ĕнчи комбайнер Краснов пилĕк кун хушшинче 75 гектар вырса пуçтарнă. Августăн 7-мĕшĕнче вăл 20 гектар вырнă, 300 центнера яхăн тырпул çапса илнĕ, çавăншăн ĕçшĕн хушса вăл 103 килограмм тĕштырă илет. Çак МТС-ри комбайнер Чернов кашни кунах 10—12 гектар вырать. Первомайски МТС-ри комбайнер Чепушкин пĕр кун çурă хушшинче 25 гектар вырнă. Чкаловски МТС-ри комбайнерка Александра Андреева августăн 7-мĕшĕнче 12 гектар вырнă, Йĕпреç МТС-ĕнчи комбайнер Мартынов пĕр кун хушшинче 17 гектар вырнă, Соловьев юлташ вара кашни кунах 15-шер гектар вырать. Çакăн пек примерсем нумай илсе кăтартма пулать. Çак примерсенчен акă мĕн курăнать: ĕçе лайăх организациленĕ çĕрте, çынсем техникăна вĕренсе алла илнĕ çĕрте, вĕсем малтанхи кунран пуçласах ĕçĕн лайăх тĕслĕхĕсене кăтартаççĕ.

Анчах комбайнсемпе вырас ĕçе халĕ нумай МТС-сенче кирлĕ пек организацилемен-ха. Чылай комбайнсем халĕ те ĕçе тытăнман. Куславкка МТС-ĕнче августăн 8-мĕш тĕлне 14 комбайнран 10 комбайн çеç ĕçленĕ. Район вунă кун хушши тырă вырать пулин те, 4 комбайн ĕçе тытăнман. Чкаловски МТС-ĕнче çав кун тĕлнех 25 комбайнран 9 комбайн кăна ĕçленĕ, Красноармейски МТС-ĕнче 12 комбайнран 8 комбайн çеç ĕçленĕ. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ кăтартса панă тăрăх, тырă вырма пуçланă хыççăн 5 кун иртсен авăн çапма тытăнмалла, çапла вара çав пиллĕкмĕш кунран пуçласа комбайнсен пурин те туллин ĕçлеме тытăнмалла. Тырпул тахçанах пиçсе çитнĕ, МТС-сем халĕ те турткаланса тăраççĕ-ха. Ыйтас пулать: мĕне кĕтеççĕ-ха МТС директорĕсемпе политотдел начальникĕсем, мĕншĕн вĕсем тырпул пулса çитнĕ хыççăн малтанхи кунсенчен пуçласах комбайнсене ĕçлеттерме тăрăшман?

МТС-сен хăшпĕр директорĕсемпе политотдел начальникĕсем тырпул пухса кĕртес ĕçри хăйсен ответлăхне мансa каяççĕ. Çĕршыв умне пысăк хăрушлăх тухса тăнă вăхăтра комбайн пек пысăк машинăсене ĕçсĕр тăратни, авăн çапассине тата государствăна тырпул парассине вăраха ярса пыни — тăван çĕршыв умĕнче пысăк преступлени туни пулать. МТС директорĕсемпе политотдел начальникĕсен комбайнсене пурне те халех ĕçе ярса, вĕсене пĕтĕм вăйĕпе, пĕр чарăнмасăр ĕçлеттермелле. Кашни комбайнер хăйĕн заданине ирттерсе тултарса пытăр. Комбайнпа тырпул пухса кĕрес плана ирттерсе тултарма пирĕн пур условисем те пур, горючине перекетлĕн тыткалани, комбайнсене краççинпа ĕçлеттермелле туни, çамрăк комбайнерсене техника тĕлĕшпе пулăшса пыни çеç кирлĕ. Вара МТС-сем тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçлĕхне пурнăçа кĕртĕç.

Комбайнсемпе туллин усă курнипе пĕрлех, жнейкăсемпе, лобогрейкăсемпе тата косилкăсемпе пуринпе те усă курмалла, тырпула кĕреплеллĕ çавасемпе çулассине организацилемелле, çапла майпа уборкăна кĕске вăхăтра, тăккаланчăксемсĕр туса ирттермелле. Тăккаланчăксене хирĕç кĕрешни — тăшмана хирĕç кĕрешнипе пĕрех. Çакăншăн кĕрешмелле ĕнтĕ политотделсен. Тырпула пĕр тăкаксăр пухса кĕртес тесе, уйхиртен кашни пучаха пуçтарса илес тесе, вĕсен пур мерăсене те йышăнмалла.

Тырпулсене ăнăçлăн пухса кĕртес ĕçре политотделсен вырăнĕ калама çук пысăк. Политотдел работникĕ вăл — большевиксен партин массăсем хушшинчи представителĕ, агитатор тата организатор пулса тăрать. Унăн çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерсе пымалла, кашни колхозăн малта пыракан çыннисене пĕлсе, хăйĕн ĕçĕнче вĕсем çине таянмалла. Политотдел работникĕ ялан хирте, бригадăра пулать пулсан çеç, вăл колхозсенче массăллă-политикăллă ĕçе большевикла сарса ярать пулсан çеç, чăн-чăн социализмлă ăмăртăва организацилесе ертсе пырать пулсан çеç, малта пыракан çынсене ырласа, кахалсемпе çапкаланчăксене питлесе пырать пулсан çеç хăйĕн ĕçĕнче ӳсĕмсем тума пултарать.

В. ЧЕРНОВ.

ЧАССР Наркомзĕмĕн Политсектор начальникĕ.

Райсовет исполкомĕ уборка ĕçне ертсе пымасть

ЧКАЛОВСКОЕ, августăн 7-мĕш. (Хамăр корр.). Халĕ ялхуçалăхĕнче хĕрӳ тапхăр—тырпулсене пухса кĕртес ĕçсем пынă вăхăтра колхозсене ĕç вăйĕ нумай кирлĕ. Çавăнпа та СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ хуласенчи тата яллă вырăнсенчи ĕçлеме пултаракан халăха ялхуçалăх ĕçĕсене мобилизацилесси çинчен ятарласа постановлени йышăнчĕç. Çав постановление халĕ пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пымалла. Ĕçлеме пултаракан пĕтĕм халăха ĕçе мобилизацилемелле. Анчах та Чкаловски район ку постановление тивĕçлипе пурнăçа кĕртсе пымасть-ха.

Районри колхозсен уйхирĕсенче мобилизаци йĕркипе пурĕ 1070 çын ĕçлемелле. Вăл шутра вĕренекен ачасемпе учительсем 851 çын, рабочисемпе служащисем 174 çын, единоличниксемпе куçса килнĕ çынсем 451 çын пулмалла. Вĕсенчен халĕ уборкăри ĕçсене миçе çын хутшăннине Чкаловски райсовет исполкомĕн мобилизаци енĕпе ĕçлекен пайĕн заведующийĕ Арланова юлташ тĕплĕн каласа пама та пултараймасть. Райсовет исполкомĕ партипе правительствăн постановленине пурнăçлассишĕн кирлĕ пек ĕçлемест.

Районри 16 колхозран пĕлтернĕ тăрăх халĕ уйри ĕçсене вĕренекен ачасемпе учительсем 419 çын, единоличниксемпе куçса килнĕ çынсем 329 çын çеç хутшăннă. Чăрмавĕ ăçта-ха? Чи малтанах çакна палăртмалла. Хăшпĕр ялсовечĕсем мобилизацилеме тивĕçлĕ çынсене халĕ те повесткăсем паман. Иккĕмĕш Чкаловски ялсоветĕнчи мобилизацилеме тивĕçлĕ 56 çынран колхозсене ĕçе тухма чĕнсе 30-шне çеç повесткăсем панă, Пĕрремĕш Чкаловски ялсоветĕнче ĕçлеме тивĕçлĕ 78 çынран 16-шне çеç ĕçе тухма чĕннĕ. Мобилизациленĕ çынсем те паянхи куна пурте мар ĕçлеççĕ.

Райсовет тата ялсовет исполкомĕсен председателĕсем ĕçлеме пултаракан мĕнпур пек халăха пурне те мобилизацилессишĕн тăрăшманнине пула тата çак ĕçре партипе правительствăн постановленине тĕрĕс пурнăçласа пыманнине пула, хăшпĕр колхозсенче пысăк йăнăшсем пулаççĕ.

Тăрăн ялсоветĕнчи Роза Люксембург ячĕпе тăракан колхозра, тĕслĕхрен, мобилизаци йĕркипе 41 çын ĕçлемелле. Анчах та уборкăн малтанхи кунĕсенче 4 çын кăна ĕçленĕ. Ыттисем ĕçе пыман. Колхозра ĕç вăйĕ çитеĕксĕр пирки колхоз председателĕ Крылов юлташ кӳршĕ ялсенчи единоличниксене, кашни гектара вырнăшăн 8 пăт тырă пама килĕшсе, тара тытнă.

Çакăн пек тĕслĕхсем «Çăлтăр» колхозра та пур. Кунта колхоз председателĕ Варанов, пĕр гектар вырнăшăн 10 пăт тырă пама килĕшсе, единоличниксене ĕçе илнĕ. Çав вăхăтрах колхоза мобилизаци йĕркипе килнĕ 38 çынран ĕçе куллен 3-шĕ çеç тухаççĕ.

Партипе правительствăн постановленине пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пымалла. Чкаловски райсовет исполкомĕн ку тĕлĕшпе колхозсене халех çирĕп пулăшу памалла.

П. НИКОЛАЕВ.

Тырпула тăккаланине хирĕç кĕрешмеççĕ

КАЛИНИНО. Туçи Мăратри «Клевер» колхозра тырра тăккаламасăр вырассишĕн кĕрешмеççĕ. Кунта кашни тăваткăл метртa 8—10 пучах тăкăнса юлать. Колхозăн кăçал тырăсене пурĕ 336 гектар çинчен пухса кĕмелле. Ĕçĕн пахалăхне халех тивĕçлĕ вырăна çĕклемесен, колхоз кăçал нумай тăкак тӳсме пултарать. Çакна звеносемпе бригадăсене ăнлантарса паман, пучах пухас ĕçе организацилемен. Жнейкăсем çумне те тырă пĕрчисене пуçтарса пыракан приспособленисем туса лартман.

Г. МАТВЕЕВ.

Стена хаçачĕсем тăтăшах тухса тăраççĕ

ШАХАСАН. Пайкилтри «Активист» колхоз ыраша 5 кун хушшинче вырса пуçтарчĕ. Августăн 7-мĕшĕнче колхозниксем кĕрхи тулла вырма тытăнчĕç. Бригадăсемпе звеносем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Ыраш вырнă вăхăтра бригадăсенчи стена хаçачĕсем 4-шар номер тухнă, колхозниксемпе 20 хутчен калаçусем туса ирттернĕ. Халĕ колхоз авăн çапать, уйран итем çине кĕлте турттарать.

А. ОРЛОВ.

Уйăхри плана ăнăçлă тултарнă

ÇĔРПУ. (Телефонпа). Социализмлă ăмăртăвăн виççĕмĕш уйăхĕнче районри чылай предприятисемпе артельсем лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕç, уйăхри плана срокчен тата ирттерсе тултарчĕç. Апатçимĕç комбиначĕ (управляющийĕ Васильева юлташ) уйăхри плана 136 процент, çу завочĕ (директорĕ Буинцев юлташ)—203 процент, Апакассинчи Громов ячĕпе тăракан промартель—178 процент, Хурăнсурти артель—168 процент тултарчĕç. Промкомбинат та известь хатĕрлес тĕлĕшпе начар мар ĕçлерĕ. Август уйăхĕнче вĕсем татах та лайăхрах ĕçлеме пулаççĕ.

Н. ЯСНОПОЛЬСКИЙ,
Райплан председателĕ.

* * *

ЙĔПРЕÇ. (Телефонпа). Крахмал завочĕ (директорĕ Казаков юлташ) икĕ тĕрлĕ крахмал, патока тата брага тăвать. Июль уйăхĕнче çак продукцисене кашнийех планпа пăхнинчен ытларах туса кăларнă. Завод уйăхри ĕç планне 127 процент тултарчĕ.

КУЗНЕЦОВ,
Райплан председателĕ.

Бригадăсен ăмăртăвĕ

КАНАШ, августăн 7-мĕш. (Телефонпа). Шаккăлти «Искра» колхоз членĕсем вăйлă тырпула кĕске срокра пухса кĕртессишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ. М. Никифорова тата Алексеев юлташсем ертсе пыракан бригадăсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе кунран-кун çĕнĕ çитĕнӳсем туса пыраççĕ. М. Федорова, Я. Якимова, А. Иванова, Е. Жандарова колхозницăсем кашни кунах ĕç юрмине 200 процент тултараççĕ. Вĕсем кунне 78-шар тĕм ыраш выраççĕ.

Кăçалхи уборкăра уйрăмах колхозăн 4-мĕш бригади лайăх ĕçлет. Бригадăра кулленех 50—55 çын ĕçлет. Вĕсем ыраша паян-ыранах вырса пĕтереççĕ. Тырăсене машинăсемпе тата кĕреплеллĕ çавасемпе вырасси колхозра тĕп вырăн йышăннă. 3 жнейка, 50 кĕреплеллĕ çава кулленех тырă выраççĕ. Кĕреплеллĕ çавасемпе кăна колхоз 40 гектар ыраш вырса пухнă.

Иртнĕ çулсенче уборкăра 200 çынран мала ĕçлемен пулсан, кăçал тырă вырнă çĕрте кулленех 270 çын пысăк çĕкленӳпе ĕçлет.

Ф. МАЛЫШКИН.

Чугунçул çинче хастарлă ĕçленĕшĕн

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Нăрваш-Шăхальри «Совет» колхозăн 16 çынтан тăракан бригади (бригадирĕ М. Михайлова юлташ) чугунçул çинче хастарлă ĕçлерĕ. Бригада тăпра ĕçĕсене 560 кубометр тăвас вырăнне 596 кубометр чухлĕ тупрĕ, ытти колхозсенчен пынă бригадăсем хушшинче малти вырăна тухрĕ. Çавăншăн чугунçул руководстви «Совет» колхоза тата бригадăна премилерĕ.

П. МАКАРОВ,
В. КАЛАШНИКОВ.

Малта пыракан вăрман завочĕсене премилеме

Чăваш республикинчи вăрман предприятийĕсем промышленность валли лайăх пахалăхлă йывăç материалсем сахал мар хатĕрлеççĕ. СССР Вăрман промышленность Халăх Комиссариачĕ 1942 çулти пĕрремĕш кварталта йывăç материалсем хатĕрлес тĕлĕшпе лайăх ĕçленĕ предприятисене палăртнă. Вĕсен шутĕнче пирĕн республикăри вăрман завочĕсем те пур. Çав заводсене премилеме СССР Вăрман промышленность Халăх Комиссариачĕ 7.750 тенкĕ укçа уйăрса панă. Чăваш АССР Вăрман промышленность Халăх Комиссарне Дубов юлташа тав тунă тата укçан премиленĕ.

Пуса татса пĕтерне

ТĂВАЙ. Лачкассинчи «Çăлтăр» колхоз (председателĕ коммунист Хаймуллин) уйри тырпула пухса кĕме лайăх хатĕрленчĕ. Колхозниксем валли столовăй, ачасем валли ясли уçнă. Колхозниксем уйра пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Ватă колхозница Перасковья Прокопьева ĕçрен пĕр кун та юлмасть. Ĕçе юратса, тĕплĕн тăвать, çамрăксене те ĕçе тĕплĕн тума вĕрентет.

Колхоз паянхи куна кантăр пусине татса пĕтернĕ.

Т. ТУРХАН.

Ĕçе тĕрĕс организацилемен çĕрте

СĔНТĔР. Урпаш ялсоветĕнчи Сталин ячĕпе тăракан тата «Хĕрлĕ паттăр» колхозсем темиçе кун хушши ĕнтĕ хĕрсех тырă выраççĕ. Анчах вĕсемпе юнашар Калинин ячĕпе тăракан колхозра ĕçсем йăлтах урăхла. Тырă пулса çитмен тесе, кунта тырă вырма августăн 4-мĕшĕнче çеç тухрĕç. Тырă вырас ĕç халĕ те сӳрĕккĕн пулса пырать. Çавăн пекех «Смычка» колхоз та ыраш вырма кая юлса тухрĕ. «Симĕс» кăмăлпа кахалланса ларни сиенлĕ пулчĕ. Ку колхозсенче ыраш чылай тăкăнасси курăнсах тăрать. Тырă вырас ĕçе тĕпренех вăйлатмалла. Çакă халĕ кунта курăнмасть-ха. Ĕç дисциплини чăтма çук япăх. Д. Захарова, К. Яргейкина, К. Кольцова колхозницăсем ĕçе ирхине 10 сехетре çеç тухаççĕ. Тырра жнейкăсемпе вырассине ку колхозсенче хакламаççĕ, кĕреплеллĕ çавасем те туман.

Тырă вырас ĕç Кăпас ялсоветĕнчи «Комбайн» колхозра та япăх пырать. Колхозăн ыраш вырмалли нумай-ха. Çапах та колхоз председателĕ Филиппов юлташ «ыраша çурлапах вырса пĕтеретпĕр», тесе ларать.

С. НАЛИМОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 10-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Августăн 10-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç Клетская районĕнче, Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерех районра, çавăн пекех тата Армавир, Краснодар, Майкоп районĕсенче хаярран çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Пирĕн карапсем Баренц тинĕсĕнче тата Хура тинĕсре противникăн икĕ транспортне путарнă, çав карапсен водоизмещенийĕ пĕтĕмĕшпе 12 пин тонна пулать.

* * *

Августăн 9-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 60 çити танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 400 яхăн автомашинине, горючи тултарнă 20 автоцистернине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 2 складне тата горючин 2 складне сирпĕнтерсе янă, полевой тата зенитлă артиллерин 14 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине 3 полка çити тата противник утлă çарĕн пĕр эскадронне сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Клетская районĕнче пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç çапăçнă. Н-ски часть кĕрешекен районра нимĕçсен 3 танкне тата 280 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Клетскаяран кăнтăрарах вырăнта пирĕн танкистсем противникăн 500 çити салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Пирĕн бомбардировщиксемпе штурмовиксем противникăн танкĕсемпе мотомехвойскисене хирĕç активлăн çапăçнă. Пĕр кун хушшинче пирĕн летчиксем нимĕçсен 27 танкне, пехотăпа грузсем турттарса пыракан 60 çити автомашинине, икĕ зенитлă батарейине, горючи тултарнă 4 автоцистернине пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 30 çити самолетне персе антарнă.

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерех районра пирĕн войскăсем противника хирĕç хаярран çапăçнă. Кунта çапăçу çавтери вăйлă пырать. Пĕр чукунçул станцийĕ кун каçиччен темиçе хутчен алăран-алла куçнă, каç умĕн вара вăл станцине пирĕн чаçсем йышăннă. Н-ски часть, противникăн атакисене сире-сире пырса, 900 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Çавăн пекех пирĕн чаçсен тылне кĕрсе кайнă нимĕç автоматчикĕсен ушкăнне те вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Краснодар районĕнче противникăн наступлени туса пыракан танкĕсемпе мотопехотине хирĕç йывăр çапăçусем пулса пынă. Участоксенчен пĕринче совет юланутçисем, хамăрăн авиаципе тата танксемпе пĕрле пулса, противникăн войскисене пысăк сиен кӳнĕ. Противникăн 10 танкне персе çĕмĕрнĕ, 8 орудине, 4 бронемашинине тата 30 яхăн автомашинине пĕтерсе тăкнă. Румынсен кавалерин икĕ эскадронне тата нимĕçсен мотопехотин пĕр батальонне çапса аркатнă. Тепĕр участокра, противникăн йышлăрах вăйĕсене хирĕç вăйлăн çапăçнă хыççăн, пирĕн чаçсем çĕнĕ рубежсем патне чакнă. Армавир районĕнче противник чылай хутчен атакăсем тунă, кăштах малалла куçнă. Çав çапăçусем вăхăтĕнче нимĕçсен 8 танкне çунтарса янă, 600 гитлеровеца ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Воронеж районĕнче противник, малтан артиллерирен тата минометсенчен персе хатĕрленнĕ хыççăн, пирĕн позицисене атакăланă. Каç пулас умĕн нимĕçсен атакине сирсе пăрахнă, тăшмана каялла хăваласа янă, ăна питĕ пысăк çухатусем кӳнĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче разведка тăвакан отрядсем активлăн çапăçнă. Кĕçĕн лейтенант Сильный ертсе пынипе пирĕн 29 боец, пралуксем карса тухнă чăрмавсем витĕр тухса, противникăн укрепленийĕсем патне пырса çитнĕ. Пирĕн разведчиксем нимĕçсен огневой точкисене гранатăсем вăркăнтарса аркатнă та хăвăрт малалла ыткăнса, нимĕçсен траншейисене пырса кĕнĕ. Пуçланса кайнă тытăçура пирĕн боецсем 40 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, 3 землянкăна, танксене хирĕç темелли пĕр тупăна сирпĕнтерсе янă, трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

Кутянин юлташ командир пулса тăракан чаçри снайпер Николаев юлташ 211 нимĕçе вĕлерсе пĕтернĕ. Çав чаçри снайперах Дебрик юлташ 216 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Минск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен 3 отрячĕ пĕр уйăх хушшинче нимĕçсен 270 салтакĕпе 5 офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Партизансем 15 автомашинăна пĕтерсе тăкнă тата 38 кĕпере сирпĕнтерсе янă. Партизансен К. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ нимĕçсен чугунçул çинчи 3 эшелонне ӳпĕнтерсе янă тата нимĕçсен генералĕпе офицерĕсем ларса пыракан çăмăл машинăна, ун çинчи çыннисемпе пĕрлех, пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем тыткăна илнĕ красноармеецсемпе командирсене çавтери тискеррĕн асаплантарса вĕлерни çинчен калакан актри уйрăм вырăнсене илсе пичетлетпĕр:

«Брянск фронтĕнчи участоксенчен пĕринче нимĕçсен окопĕнче пирĕн боецсен виллисене тупнă. Гитлерла мерзавецсем çав боецсене питĕ те тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ пулнă. Нимĕç ирсĕрĕсем кĕçĕн политрукăнне А. И. Кобловăйне сăмсипе тутине касса илнĕ, куçĕсене чиксе шăтарнă тата хырăмне çурнă. Гитлерла çынçиенсем Баймугамбетов красноармееца штыксемпе чиксе шăтарса пĕтернĕ, унăн урисемпе аллисене пăрса татнă тата унăн ӳпкипе чĕрине татса туртса кăларнă. К. Николаенко лейтенанта, кĕçĕн командире Логинова тата Асадов красноармееца нимĕçсем бензин сапса чĕрĕллех çунтарса янă». Акт çине çаксем алă пуснă: лейтенант Ковалев, воентехник Дерэга, старши политрук Швейкин, кĕçĕн политрук Миментов, военфельдшер Юхнов, красноармеецсем Мамедов тата Волошин.

* * *

Монс районĕнче (Бельгия) кăмрăк кăлармалли шахтăсенче саботажсем пулнă пирки кăмрăк кăларасси чылаях чакнă. Хăшпĕр шахтăсем хытах сиенленсе ĕçлеме чарăннă.

Августăн 11-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Августăн 11-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем Клетская районĕнче, Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра, çавăн пекех тата Армавир, Краснодар, Майкоп районĕсенче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

* * *

Клетская районĕнче пирĕн войскăсем гитлеровецсен темиçе атакине сире-сире пăрахнă. Клетскаяран кăнтăрарах вырăнта пирĕн Н-ски часть противникăн шăтарса кĕнĕ танкĕсемпе пехотине хирĕç çапăçнă тата 300 гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр участокра старши лейтенант Попов юлташ командир пулса ертсе пыракан ротăри боецсем противникăн йышлăрах вăйĕсене хирĕç çапăçнă, темиçе атакăна сирсе пăрахса гитлеровецсене 125 çынран кая мар пĕтерсе тăкнă. Пирĕн авиацин чаçĕсем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 15 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерех районра Н-ски танковăй часть противника кĕтмен çĕртен пырса çапнă. Хаяр çапăçура пирĕн танкистсем нимĕçсен 17 танкне, 9 противотанковăй орудине тата виçĕ самоход-орудине, 15 автомашинине тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 350 çынран кая мар пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен ирĕксĕрех оборонăна куçма лекнĕ.

* * *

Краснодар районĕнче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Пирĕн пĕр чаçри боецсем нимĕçсен 5 атакине сирсе пăрахнă, 7 танкне çунтарса янă тата 500 гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр участокра совет артиллерисчĕсемпе бронебойщикĕсем нимĕçсен 9 танкне тата 14 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Армавир районĕнче пирĕн чаçсем вăйлă çапăçусем хыççăн çĕнĕ позицисем патне чакнă.

* * *

Воронеж районĕнче гитлеровецсем пирĕн пĕр чаçăн оборона тумалли рубежне атакăланă. Атакăна сирсе пăрахса каялла чакакан противника хыçран йĕрлесе пырса, пирĕн боецсем халăх пурăнакан пункта кĕрсе кайнă, халĕ унта урамри çапăçусем пыраççĕ. Воронежран кăнтăрарах вырăнта Донăн хĕвеланăç çыранĕнче неприятель, халăх пурăнакан хăшпĕр пунктсене йышăнса илме хăтланса, пирĕн чаçсене татти-сыпписĕр атакăлать. Гитлеровецсен пур атакисене те, вĕсене пысăк çухатусем тӳстерсе, сирсе пăрахнă. Çав çапăçусенче противникăн 14 танкĕпе бронемашинине тата салтакĕсемпе офицерĕсене 1.000 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Çурçĕр-хĕвеланăç фронтĕнче разведка тăвакан отрядсен активлă кĕрешĕвĕ пынă. Разведчиксен группи противник вырнаçса тăнă çĕре кĕтмен çĕртен пырса тапăннă та нимĕçсен 80 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Н-ски чаçри снайперсем икĕ кун хушшинче 60 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

И. юлташăн партизанла отрячĕ, Сумы облаçĕн районĕсенчен пĕринче кĕрешекенскер, хăй тăшмана хирĕç кĕрешме пуçланăранпа нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1.000 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 10 склада, 5 кĕпере сирпĕнтерсе янă, 21 автомашинăна тата боеприпассем тиенĕ 77 лава пĕтерсе тăкнă. Партизансем тăшманăнне 7 миномет, 24 пулемет, 190 винтовка, 260.000 патрон тата ытти тĕрлĕ трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 305-мĕш пехотнăй дивизийĕн 577-мĕш полкĕнчен Хĕрлĕ Çар енне каçнă салтак Антон Ш. çапла каласа панă: «Темиçе кун каярах вырăс летчикĕсем пирĕн подразделени çине çавтери хаяррăн вĕçсе пырса тапăнса бомбăсем пăрахрĕç. Пăтрашупа усă курса, эпĕ хамăрăн часть вырнаçса тăнă çĕртен пăрăнтăм та, 30 километр утса тухса, тыткăна парăнтăм. 305-мĕш дивизи Францирен Хĕвелтухăç фронтне май уйăхĕнче тухса килчĕ. Çав вăхăт хушшинче дивизи хăйĕн личнăй составĕнчен çуррине яхăн çухатрĕ те ĕнтĕ. Хăшпĕр подразделенисене пуçĕпех аркатса тăкнă. Çапла, сăмахран, 10-мĕш ротăра 230 çын пулнă, халĕ ĕнтĕ унта 50 çынран ытла мар тăрса юлнă. Салтаксем хăйсем хушшинче çапла калаççĕ: «Эпир пурте Российăрах пĕтетпĕр», теççĕ.

* * *

Июль уйăхĕнче нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем Белоруссi ССР-чи Борисов хулинче мирлĕ çынсенчен 800 çынна асаплантарса тата персе вĕлернĕ.

* * *

Гессен (Германия) провинцийĕнчи лагерьсенче тыткăна лекнĕ француз çар çыннисем вуншар пин çын асапланаççĕ. Тыткăнрисене талăкне 14—16 сехет ĕçлеттереççĕ. Вĕсем çĕрнĕ кĕрперен пĕçернĕ яшкапа тăранса пурăнаççĕ, час-часах пĕр татăк çăкăр та илеймеççĕ. Тыткăнрисем хушшинче чирлисем нумай, вĕсене медицина енĕпе нимĕнле пулăшу та памаççĕ. Шлиц хули çывăхĕнчи лагерьте тыткăнри француз çар çыннисем кунсерен 10—15-шер çын вилеççĕ.

Ют çĕршывсенче

„Гитлера хĕвеланăçĕнчен пырса çапма пирĕн ăс-хакăл ыйтать“

Англири журналсем иккĕмĕш фронт тума кирли çинчен

ЛОНДОН, августăн 9-мĕш. (ТАСС). «Ньюс стетсмен энд нейшен» журнал вăрçăри лару-тăру çинчен статья пичетлесе кăларнă. Унта иккĕмĕш фронта çывăх вăхăтсенчех уçма кирлине çирĕплетсе каланă. Англин вăйĕсем тĕрлĕ материксемпе тинĕссем çинче сапаланса тăнине кăтартса парса, журнал çапла çырать: «Ĕçе малалла вăраха хăварса çыни каçарма çук инкек-синкеклĕ япала пулса тăма пултарать».

Авиаци журналĕ «Эроплейн» ум статья пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: пĕрлешнĕ çĕршывсем ССР Союзĕ тинçĕр çинчи вăрçа пĕччен туса пынине аякран пăхса тăма пултараймаççĕ. «Нимĕçсем Российăна инçете кĕрсе кайса лакса ларнă вăхăтра Гитлера хĕвеланăçĕнчен пырса çапма пирĕн ăс-хакăл ыйтать, — тесе çырать журнал.—Российăна пархатаршăн тенĕ пек сентиментальнăй шухăш-кăмăлсемпе мар пулăшмалла. Çав пулăшу вăл тăшмана çапса аркатмалли планăн пĕр пайĕ пулса тăрать. Халăхпа правительствăна реалистла позицирен нимĕн те пăрса яма тивĕçлĕ мар».

США-ри университетсенче ĕçлекен çынсем иккĕмĕш фронт çинчен

НЬЮ-ЙОРК, августăн 9-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи университетсенче ĕçлекен çынсем Рузвельт патне çыру янă. Çав çырура вĕсем иккĕмĕш фронта халех уçма ыйтаççĕ. Рузвельта чĕнсе каланă çырура çапла çырнă: «Пĕрлешнĕ çĕршывсен татăклă кĕрешӳ пуçлас вăхăт çитрĕ, çавăнпа та эпир Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен президентĕнчен иккĕмĕш фронта халех уçас ыйтăва васкавлăн пăхса тухма çине тăрсах ыйтатпăр».

Вашингтона Рузвельт патне çырнă çырупа студентсен делегацийĕ пынă, çыру айне Нью-Йоркри тĕрлĕ шкулсенчи 2.238 студент алă пуснă. Рузвельта чĕнсе çырнă тырура студентсем иккĕмĕш фронта питех те васкавлăн уçма ыйтаççĕ.

СИДНЕЙРИ МИТИНГ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 9-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ Сиднейран çапла пĕлтерет: унта пулса иртнĕ массăллă митингра резолюци йышăннă. Çав резолюцире фашизма 1942 çулта аркатса тăкас шутпа Англирен Европăна çĕмĕрсе кĕме ыйтнă.

Индири лару-тăру

Индин национальнăй конгресс исполкомĕн сессийĕ

ЛОНДОН, августăн 8-мĕш. (ТАСС). Ĕнер Бомбейра Индин национальнăй конгресс исполкомĕн сессийĕ уçăлнă. Сессире конгресс исполком бюровĕ йышăннă резолюцие сӳтсе явнă. Çав резолюцире Англия Индире пуçпулса тăрассине пĕтерсе тăкма ыйтнă тата çавăн пек пуçпулса тăрассине пĕтерме ыйтнине Англи правительстви сирсе ярсан, Инди халăхĕ Англи влаçĕсене пăхăнмалла марришĕн массăллă кампани пуçласа ярассипе хăратнă (Англи учрежденийĕсемпе вĕсен мероприятийĕсене пассивлăн хирĕç тăни, Англи таварĕсене хирĕç бойкот туни тата ыт. те).

Конгресăн исполкомĕ исполком бюровĕн резолюцине çирĕплетнĕ. Резолюцие хирĕç 13 çын сасăланă. Резолюцие тӳрлетӳсем кĕртес тĕлĕшпе панă сĕнӳсене пурне те сирсе янă.

Конгресс исполкомĕн резолюцийĕ пирки Инди правительстви тунă заявлени

ЛОНДОН, августăн 9-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Инди правительстви (Инди вице-королĕ çумĕнчи исполнительнăй совет) Индин национальнăй конгресс исполкомĕ йышăннă резолюци пирки заявлени тунă.

Заявленире çакна кăтартса панă: «Ырă шухăш çиеле тухассине Инди правительстви чăтăмлăн шанса кĕтсе тăнă, анчах та унăн шанчăкĕсем пурнăçа кĕреймерĕç. Халĕ конгресс тунă киревсĕр ĕçсене хирĕç пĕр ответ кăна пулма пултарать. Инди правительстви конгресăн решенийĕ çине Инди халăхĕн тĕпкĕ пурнăçĕшĕн хăй тытакан ответлăхпа тата хăйĕн союзниксем умĕнчи обязательствисемпе пăхах та çыхăнса тăман решени çине пăхнă пек пăхать».

Индин пуласлăхĕ тĕлĕшпе Англи правительстви мĕнле политика тытни уççăн курăнса тăрать, — тенĕ заявленире. «Самоуправлени туса хурас тĕлĕшпе Англи правительстви Инди халăхне пур енĕпе те пулăшса пыма сăмах панă, хăçан та хăçан çĕнтерӳ кунĕ çитет, çавăн чухне Инди çĕршывĕн конституцийĕ тĕлĕшпе ыйтăва индиецсем хăйсемех татаççĕ. Çакăн çинчен Англи парламенчĕпе Англи халăхĕ шантарса каланă тата çакна ăна Инди халăхĕ те тĕрĕс хакласа йышăннă».

Инди правительствин шухăшĕпе, конгресăн решенине йышăнни вăл союзниксен ĕçне сутнине, Индири мĕнпур ырă шухăшлă сийсене сутнине пĕлтерет. Индири общественноçăн çав сийĕсем конгресс майлă тăмаççĕ, вĕсем вăрçă туса пынă çĕрте активлă вырăн йышăнса тăраççĕ.

Индири мусульмансен лигин позицийĕ

ЛОНДОН, августăн 9-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Индири мусульмансен лигин лидерĕ Джинна çапла каланă: конгресс лартнă требование мусульмансен лигийĕ йышăнма пултараймасть, тенĕ.

Джинна сăмахĕсем тăрăх, конгресс мусульмансен интересĕсене, çавăн пекех тата ытти сахал йышлă халăхсен интересĕсене те хакламан.

Англие пăхăнмалла мар тăвас тĕлĕшпе Индире пуçланă кампани

ЛОНДОН, августăн 9-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англие пăхăнмалла мар тăвас тĕлĕшпе движени организациленĕ çĕрте Гандин пĕрремĕш утăмĕсем — вăл Инди издательствисенчен хаçатсем кăларассине чарса лартма ыйтни пулса тăнă.

Окупациленĕ совет территорийĕсем çинче румынсем тискеррĕн хуçаланни

СТОКГОЛЬМ, августăн 8-мĕш. (ТАСС). Гитлерăн «Дейче альгемейне цейтунг», «Дейче Украине цейтунг» тата «Ревалер цейтунг» хаçачĕсем румынсем оккупациленĕ Молдави ССР-ĕн тата Украинăн кăнтăр пайĕнчи районĕсенче, вăл шутра Одессăра та, ирсĕрлĕхпе çарату тата пусмăрлăх режимне кăтартса паракан пĕлтерӳсем пичетлесе кăларнă. Колхозсемпе колхозниксен пурлăхĕсемпе çĕрĕсене туртса илсе, вĕсене Румыни влаçĕсем лартнă управляющисен аллине параççĕ. «Ревалер цейтунг» çапла пĕлтерет: Антонеску приказ кăларнă, çав приказ тăрăх Бессарабипе Кăнтăрти Украинăн çĕрĕсене (Кăнтăрти Украинăна румынсен приказĕсенче «Заднестровье» тесе ят панă) румынсем хушшинче, уйрăмăн илсен, «çак вăрçăра палăрнисем» хушшинче валеçеççĕ. «Дейче альгемейне цейтунг» хаçат: совет хресченĕсем захватчиксемшĕн ĕçлеме килĕшмеççĕ, тесе йышăнать.

Çав хаçатах çапла çырать: «Заднестровье» çĕрĕсене Румыни законĕсен рамкисенче тытса пыраççĕ». Антонеску правительстви кăларнă распоряжени тăрăх, кашни жандармăн кирек-мĕнле совет гражданинне те администрацилле йĕркепе икĕ çула çити срокласа тĕрмене тытса хупма право пур. «Çакăнта пысăкрах наказани пама тивĕçлĕ преступление,—тесе çырать хаçат,—военно-полевой судсем пăхса тухаççĕ, вĕсен приговорĕсене хирĕç жалоба пама çук». Хаçат пĕлтернĕ тăрăх, вырăспа Украина чĕлхисене чарса лартнă. Вырăссемпе украинецсен шкулĕсене хупнă. Вырăсла тата украинла çырнă вывескăсене пĕтернĕ, Одессăри мĕнпур урамсене нимĕçле ятсем панă.

«Дейче Украине цейтунг» хаçат Одесса хули пушанса юлни çинчен çырать, мĕншĕн тесен халăх тарса пĕтнĕ. Хулари пурнăç пăчланса ларнă. Портра пĕр судно та курăнмасть.

Совет граждăнĕсем захватчиксене хаяррăн курайманнине, «Дейче Украине цейтунг» хаçат хăех çырнă тăрăх, çак тĕслĕх те кăтартса парать партизансем ялти районсенче кăна мар, Одесса хулинче те çавтери хăюллăн кĕрешеççĕ. Румынин оккупацилле влаçĕсен партизансене хирĕç халĕ те вăйлăн кĕрешме лекет,—тесе çырать хаçат. Одессăра вĕсем катакомбăсенче пытанса пурăнаççĕ. «Унтах,—тесе çырать хаçат,—саботажниксен отрячĕсем те пытанса пурăнаççĕ. Вĕсем румыни влаçĕсене пысăк йывăрлăхсем кӳреççĕ».

ОККУПАНТСЕН ТИСКЕР-КАЙАКЛА РАСПОРЯЖЕНИЙĔ

Нимĕçсен Брюссельри радиостанцийĕ халăха хаяррăн асăрхаттарса çапла каланă: кам та кам противникăн лагерьне хутшăнма хăтланать, çавсене тытсан çийĕнчех асаплантарса вĕлереççĕ, Çав çынсем тарса пытанма пултарсан, вара вĕсен тăванĕсене асаплантараççĕ. Вĕсене тĕрмене хупаççĕ, вĕсен пурлăхĕсене тытса илеççĕ. (ТАСС)

Конгресс лидерĕсене арестлени

ЛОНДОН, августăн 9-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Гандие, Азада, Неруна, Валлабхай Петеле тата конгресс исполком бюровĕн ытти членĕсене паян арестленĕ. Арестленисем хушшинче конгресăн Бомбейри организацийĕн 20 çити деятелĕ пур. Конгресăн арестленĕ лидерĕсене лартнă уйрăм поезд паян иртине Бомбейран Пуну хулине тухса кайнă тесе шутлаççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Фронтовиксем пире тылра мĕнпур вăйпа ĕçлеме, фронта ытларах пулăшма чĕнеççĕ

Фронтран килнĕ çырусенчен

Хĕрлĕ Çара Чăваш республикинчен кайнă, халĕ фронтра нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешекен юлташсем редакцине тата ытти общественлă организацисене час-часах çырусем яраççĕ. Çав çырусенче вĕсем пирĕн республикăри ĕççыннисене производствăра тăрăшса ĕçлеме, ытларах та ытларах хĕçпăшал тата апат-çимĕç туса хатĕрлессишĕн кĕрешме чĕнеççĕ.

Пирĕн республикăри ĕççыннисем «Комсомол Чувашии» ятлă бронепоезд туса Хĕрлĕ Çара парнеç. Çав бронепоезд халĕ фронтра. ВЛКСМ Обкомне янă çырура бронепоезд экипажĕ гвардейски дивизион ятне илме тивĕçлĕ пуласшăн хастарлă кĕрешме пулать. Бронепоезд экипажĕ хăй енчен пирĕн ĕççыннисене тылра тимлĕн ĕçлеме чĕнет: «Пĕр икĕ хут, виçĕ хут ӳстерсе ĕçлесе Оборона Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулăр!» тет. Çав бронепоезд боецĕсемпе командирĕсем колхозникĕсемпе колхозницăсене ялхуçалăхĕнчи ĕçсене ăнăçлăн вĕçлеме чĕнеççĕ.

Колхозлă ялхуçалăх техникумĕн студенчĕ пулнă комсомолец П. Иванов, халĕ Хĕрлĕ Çар лейтенанчĕ, В. хулинчен çапла çырать:

«Çĕр çинче те сывлăшра та моторсен шавĕ. Тăшман тарăн тылран илсе пынă нумай вăйсене çапăçăва кĕртсе ярать, Анчах эпир нимрен те хăрамастпăр. Тăшмана малалла килсе кĕме памастпăр. Тăшман пысăк çухату тӳсет, фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсене тыткăна нумай илтĕмĕр, трофейăсем нумай.

Эпĕ фронтра çапăçатăп. Анчах манăн шухăш сирĕнпе пĕрлех. Юлташсем, эпир—фронтра, эсир—тылра тăшмана тĕппипех аркатса тăкма кирлисене пĕтĕмпех тăвăр!

Кăкăрта комсомолла вĕри чĕре тапать. Пирĕн юнтымарĕсенче юн пур чухне эпир гитлерла бандăсене ним хĕрхенмесĕр çапса аркатса пырăпăр. Халĕ эсир тырă выратăр. Уборкăра комсомолецсем пуринчен те лайăхрах ĕçлессине, тырпулсене кĕске срокрах тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртессине эпĕ шанатăп. Ытларах пухса кĕртнĕ тырран кашни центнерĕ тăшмана ытларах çапни пулса тăрать. Çамрăксен мĕнпур вăйне—тырпула пухса кĕртме!».

Сĕрпӳ районĕнчи «Ĕмĕт» колхозăн председателĕ пулнă Егор Тихонов Хĕвеланăç фронтĕнчен çапла çырать:

«Юлташсем, колхозниксемпе колхозницăсем, ялти интеллигентсем! Эпир, сирĕн тăвансем, упăшкусем, ывăлусем, алла хĕçпăшал тытса, фронтра талăкĕ-талăкпе тăшмана хирĕç çапăçатпăр, тăван çĕршыва тăшманран хăтарассишĕн хамăрăн пуçăмăрсене шеллемесĕр кĕрешетпĕр, малалла куçса оборонăна çирĕплетсе пыратпăр. Сирĕн те çавăн пекех, темле йывăрлăх пулсан та, ăнса пулнă тырпула срокра тата ним тăкаксăр пухса кĕртес пулать. Эпĕ сире çавăн пек тума ыйтатăп. Ватти-вĕттипех пĕтĕм вăя пухса ĕçлесе, колхоз хуçалăхне тата лайăхрах çирĕплетме тăрăшăр. Вара, сирĕнпе тачă çыхăнса кĕрешнипе, 1942 çулта тăшмана пĕтĕмпех çапса аркатăпăр».

ЧУВАШСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ ПЕДАГОГИЧЕСКИЙ ИНСТИТУТ НАРКОМПРОСА РСФСР в г. Мариинском Посаде

продолжает прием заявлений на I курсы всех факультетов Педагогического и Учительского институтов.

Зачисление в число студентов лиц, принимаемых в Институты без испытаний, производится с 1 по 5 августа; начало вступительных испытаний с 17 августа в 9 часов утра.

Подробнее о правилах приема см. газету «Красная Чувашия» от 6 июня с. г.

Дирекция.

2—1.

Механическая мастерская Чувашстройтреста производит пересечку старых подпилков и слесарных пил.

Все организации, предприятия, колхозы и т. д. могут доставить старые подпилки, слесарные пилы на пересечку по адресу: Чебоксары, у. Луговая, № 12, телефон № 0-31.

3—2. Чувашстройтрест.

Срочно требуются: инженеры, механики, электромеханики, слесаря, экономисты, бухгалтера, счетоводы, зав. хозяйством, телефонистки, мастер под'ездных путей, рабочие квалифицированные и неквалифицированные, работники охраны.

За справками обращаться: Чебоксары, ул. Байдукова, 8, отдел кадров, телефон 3—83.

ОБ'ЯВЛЕНИЕ

Организуется филиал Горьковского электртехнического техникума НКЭП.

Техникум без отрыва от производства готовит техников-технологов по холодной обработке металлов резанием и давлением и техников-электриков по аппаратостроению.

Срок обучения 4 года.

В техникум принимаются лица без ограничения возраста, имеющие образование в об'еме 7-ми классов средней школы.

Заявления о зачислении в техникум подаются на имя заведующего филиалом с приложением автобиографии, свидетельства об образовании, свидетельства о рождении, справки лечебного учреждения о состоянии здоровья, справки об отношении к воинской обязанности (для военнообязанных), трех фотокарточек.

Вместо свидетельства о рождении, граждане достигшие 16-летнего возраста, пред'являют паспорта при личной явке.

Поступающие подвергаются приемным экзаменам по программе 7-го класса средней школы:

1). По русскому языку (письменно и устно), 2) по математике (письменно и устно), 3) по Конституции СССР.

Окончившие 7 классов средней школы с отметкой «отлично» по основным предметам, а также окончившие 7 классов средней школы в 1941 году и 1942 г. с отметкой «отлично» и «хорошо» по основным предметам, принимаются в техникум без приемных испытаний. Лица, сдавшие экзамен за 7 класс средней школы в 1941 и 1942 г. не на «отлично» и «хорошо», принимаются в текущем при наличии в нем свободных мест без экзаменов, а при недостатке свободных мест—с проведением конкурсных экзаменов.

Приемные экзамены будут проводиться с 20 по 28 августа.

Лица, окончившие 9 и 10 классов средней школы, принимаются без приемных экзаменов на 2-й курс.

Производится прием заявлений на 3-й курс от лиц, имеющих соответствующие знания.

Оплата за обучение в техникум на общих основаниях.

Заявления принимаются до 17 августа ежедневно от 18 час. до 19 час., в помещении бюро пропусков (ул. К. Маркса, 80).

Зав. филиалом.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 903 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф б. 58 84 п. л.